25-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
18
КĔҪНЕРНИКУН
39(6276) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАҪАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 16-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Февралĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, татăклăн штурмланă хыҫҫăн тата унтан кайран урамсенче хаяррăн ҫапăҫнă хыҫҫăн, Харьков хулине тытса илнĕ.

Ростов облаҫĕнче пирĕн войскăсем Большекрепинская, Чалтырь ятлă район центрĕсене, Генеральский мост, Султан—Салы, Крым, Недвиговка, Синявка ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех ҫапăҫса пынă.

* * *

Февралĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаҫĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче тăшманăн войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ҫити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 20 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 6 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Новошахтинскран хĕвеланăҫнерехре пирĕн войскăсем, малалла куҫса пырса, халăх пурăнакан темиҫе пункта йышăнса илнĕ. Новошахтинскра пирĕн боецсем нимĕҫсен бронепоездне, 6 танкне, 4 бронемашинине, 9 орудине, ҫар грузĕсем тиенĕ 35 вагона тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаҫсем противникран 59 танк, хăй тĕллĕн ҫӳрекен 11 оруди, 400 автомашинăна ҫити, боеприпассемпе ҫар хатĕрĕсем тата ҫар пурлăхĕ тиенĕ 170 вагона тытса илнĕ. Нимĕҫсен 1.500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Красный Сулинран хĕвеланăҫнерехре пирĕн чаҫсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктăн районĕнче пирĕн Н-ски часть нимĕҫсен хăй тĕллĕн ҫӳрекен 3 туппине, бронемашинине, 60 автомашинине, 200 винтовка ытла тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Ҫапăҫу хирĕнче тăшманăн нумай вилли выртса юлнă.

* * *

Красноармейское районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ ҫапăҫусем туса пынă. Н-ски часть вăйлăн ҫапăҫнă хыҫҫăн халăх пурăнакан пĕр пысăк пункта гитлеровецсенчен тасатнă. Нимĕҫсен 400 салтакĕпе офицерне ҫити вĕлернĕ. 7 оруди тата 8 миномет тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăн контратакине сирсе ярса, гитлеровецсене пĕр батальона ҫити вĕлерсе пĕтернĕ тата нимĕҫсен 5 танкне ҫунтарса янă.

* * *

Харьков районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ ҫапăҫусем туса пынă. Тăшман ҫав тери вăйлăн хирĕҫ тăрать. Совет чаҫĕсем, вăйлăн пыра-пыра ҫапса, тăшманăн оборонине ҫĕмĕрсе тăкнă, гитлеровецсен чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраҫҫĕ. Пĕр участокра кăна пирĕн боецсем хаяр ҫапăҫура нимĕҫсен 43 танкне пĕтерсе тăкнă тата тăшман пехотин батальонне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра совет подразделенийĕсем тăшманăн темиҫе укреплениине тытса илнĕ те халь малалла куҫса пыраҫҫĕ.

* * *

Витебск облаҫĕнчи партизансен ушкăнĕ тăшманăн гарнизонне сасартăк тапăнса 49 гитлеровеца вĕлернĕ. Ытти нимĕҫсем хĕҫпăшалĕсене пăрахса тарнă. Тепĕр отрядри партизансем нимĕҫсен 2 ҫар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз, салтаксемпе офицерсем ларса пыракан 5 вагон, автомашинăсем тиенĕ 4 платформа тата горючи тултарнă цистернăсем ҫĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕҫсен 82-мĕш пехотнăй дивизи командирĕн адъютанчĕ — тыткăна лекнĕ капитан Теодор Циглер ҫапла каласа панă: «Нимĕҫ командованийĕн официальнăй пĕлтерĕвĕсенче — нимĕҫ войскисем Кавказран тата Дон ҫинчен хĕллехи оборона линине кĕскетес шутпа план тăрăх каялла чакаҫҫĕ, тесе пĕлтереҫҫĕ. Анчах ҫак пĕлтерӳсем пире, Хĕвелтухăҫĕнче тăракан офицерсене, улталаймаҫҫĕ. Иртнĕ ҫулах пирĕн дивизири хăшпĕр старши офицерсем нимĕҫ войскисен хĕллехи отступленине—вăл хăрушă япала пулма пултарассине систерет, тесе хакларĕҫ. Халĕ ĕнтĕ ку офицерсем Германия ҫĕнтерес шанăҫа пĕтĕмпех ҫухатрĕҫ. Виҫҫĕмĕш уйăх ĕнтĕ Германи армийĕ чакса пырать. Германия ҫĕнтересси ҫинчен халĕ ĕнтĕ калаҫмалли те ҫук. Халĕ пĕр ҫак ыйту ҫеҫ тухса тăрать: Германия тата мĕн чухлĕ вăхăт хушши хăйне хӳтĕлесе тăма пултарĕ?»

* * *

Февралĕн 13-мĕшĕнче нимĕҫсен информаци бюровĕ ҫакăн пек пĕлтерӳ панă: «Германин тата союзниксен войскисен йышлă контратакисем, фронтăн кăнтăр участокĕнче вырăнĕ-вырăнĕпе территори енчен чылай пысăк выигрыш тунипе вĕҫленнĕскерсем, ҫакăн пек вывод тума май параҫҫĕ: ытла та асăрханса каласан, фронтра пĕтĕмĕшле лару-тăру халь лайăхланчĕ», тенĕ. Унтан пĕр кун иртсен, февралĕн 15-мĕшĕнче, Гитлерăн главнăй ставки фронтăн ҫак кăнтăр участокĕнче нимĕҫ ҫарĕ территори енчен тунă выигрыш мĕн иккенне ăнлантарса пачĕ. Гитлерăн ставкин пĕлтерĕвĕнче ҫапла каланă: «План тăрăх операцисем туса пырса, Германи войскисем Ростов тата Ворошиловград хулисене хăварнă», тенĕ. Нимĕҫсен командованийĕ ҫакăн пек сӳпĕлтетни гитлеровецсен лагерĕнче сынсем пăтранса кайнине, хăраса ӳкнине питĕ лайăх кăтартса парать. Ростовпа Ворошиловград хулисем пек паха стратегиллĕ позицисене нимĕҫ войскисем ҫухатни, гитлеровецсем ăнлантарса панă тăрăх, «тĕрĕс палăртса хунă план тăрăх» пулнă пулать вара. Ҫакăн пек ыйту тухса тăрать: мĕншĕн-ха вара гитлеровецсем темĕн чухлĕ юн юхтарса илнĕ хуласене сасартăк пăрахса хăварма кăмăл тунă? Паллах ĕнтĕ, нимĕҫсем Ростовпа Ворошиловград хулисенчен нимĕҫ командованийĕн планĕ тăрăх тухса кайман. Нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене ҫав хуласенчен Хĕрлĕ Ҫар ҫапса кăларнă, халĕ вĕсене хĕвеланăҫнелле хăваласа пырать. Ыран ĕнтĕ нимĕҫ командованин малтан палăртса хунă план тăрăх кĕрешсе пырса, «нимĕҫ войскисем Харьков хулине хăварнă», тесе пĕлтерме тивет пуль.

Февралĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ ҫапăҫусем туса пынă.

* * *

Харьковран хĕвеланăҫнерехре пирĕн войскăсем фашистла войскăсен ҫапса аркатнă юлашкийĕсене хăваласа пынă. Харьковра тытса илнĕ документсем хушшинче нимĕҫ командованийĕн приказĕсене тупнă; ҫав приказсенче Харьковри гарнизона Харьков хулине кирек мĕн пулсан та алăра тытса юлма хушнă. Нимĕҫсем хăйсене пуринчен ытла хĕвелтухăҫ енчен вăйлăн пырса ҫапĕҫ тесе шутланă, ҫавăнпа та унта мотопехотăпа танксем нумай илсе пырса тăратнă. Совет войскисем тăшман пĕрех те кĕтмен енчен—ҫурҫĕр енчен пырса ҫапнă та хула хĕррине кĕрсе кайнă. Ҫав вăхăтрах пирĕн чаҫсем тăшман оборонине ытти участоксенче те татнă, вара урамсенче пулса иртнĕ хаяр ҫапăҫусем хыҫҫăн Харьков каллех совет хули пулса тăнă. Харьков районĕнче тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине нумай пĕтерсе тăкнă. Тĕрлĕ складсем, хĕҫпăшалсем тата транспорт хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ, вĕсене халĕ шута илеҫҫĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн войскăсем ăнăҫлăн малалла тапăнса пынă. Тăшман питĕ вăйлăн хирĕҫ тăрать, анчах та совет чаҫĕсем пыра-пыра ҫапнипе халăх пурăнакан пунктсене пĕрин хыҫҫăн теприне хăварать, пысăк ҫухатусем тӳсет. Халăх пурăнакан пĕр пунктри урамсенче кăна гитлеровецсен 200 виллине шутласа кăларнă. Хăй тĕллĕн ҫӳрекен 2 оруди, 11 пулемет, 3 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем нимĕҫсен 3 танкне персе ҫĕмĕрнĕ, тăшманăн пехотин пысăк колоннине сапаласа янă, унăн чылай пысăк пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармейское районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ ҫапăҫусем туса пынă. Гитлеровецсем пирĕн чаҫсене малалла кайма чарас тесе пĕтĕм вăйпа тăрăшаҫҫĕ. Н-ски чаҫăн боецĕсем тăшманăн контратакине сирсе ярса 400 гитлеровеца ҫити пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫсен 6 танкне персе ҫĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн моторизованнăй часть тăшман пехотин ротине ҫапса аркатнă, нимĕҫсен 4 танкне тата грузсем тиенĕ 15 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Курскран ҫурҫĕреллерехре пирĕн войскăсем ăнăҫлăн малалла тапăнса пынă. Н-ски соединенин чаҫĕсем нимĕҫсем хирĕҫ тăнине ҫĕнтерсе малалла кайнă та халăх пурăнакан темиҫе пункта тытса илнĕ. Пирĕн боецсем халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктра тыткăна парăнма килĕшмен нимĕҫ гарнизонне ҫавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. 600 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Волхов фронтĕнче сывлăшри ҫапăҫусенче, зенитнăй артиллери тата ҫĕр ҫинчи войскăсем пенипе пĕр кун хушшинче нимĕҫсен 14 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Смоленск облаҫĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕҫ захватчикĕсемпе ҫапăҫса тăшманăн 160 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Смоленск облаҫĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕҫсен ҫар техникипе чĕрĕ вăй турттарса пыракан 8 эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Курск облаҫĕнчи Гнилое ялĕнче нимĕҫсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ пурăнакан 180 ҫынна персе вĕлернĕ. Палачсем ҫемьи-ҫемьипе касса тухнă. Гусарихин ҫемьине—11 ҫынна, Поповăн ҫемьине — 5 ҫынна, Боровский ҫемьине — 4 ҫынна, Сычев ҫемьине — 4 ҫынна т. ыт. те тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ҫак кунсенче пулса иртнĕ ҫапăҫура старши сержантăн М. П. Юдинăн пулемет расчечĕ противникăн 5 дзотри вут-хĕмне пусарса лартнă тата нимĕҫ автоматчикĕсене пĕр взвода ҫити вĕлерсе тăкнă. Юдин пĕр хăй кăна хăйĕн шанчăклă винтовкипе персе 10 фашиста вĕлернĕ.

Ӳкерчĕк ҫинче: старши сержантăн М. П. Юдинăн пулемет расчечĕ ҫĕнĕ позици ҫине куҫать.

М. БЕРКОВИЧ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ростов—пирĕн алăра!

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Ĕнер, темиҫе кун хушши пынă вирлĕ ҫапăҫусем хыҫҫăн, пирĕн войскăсем Дон ҫинчи Ростов хулине йышăнса илчĕҫ.

Ростов хулине илнипе ĕнтĕ Донпа Атăл хушшинчи анлă участокра пынă ҫапăҫусем вĕҫленчĕҫ.

Ростовшăн пыракан ҫапăҫусем Батайск районĕнче пуҫланчĕҫ. Кĕтмен ҫĕртен ҫĕрле пырса ҫапса, нимĕҫсене хулана хӳтĕлесе тăракан халăх пурăнакан 12 пунктран хĕссе кăларнă. Противник ҫухалса кайнă. Батайскри чугунҫул ҫинче танксем, машинăсем, боеприпассем тата продовольстви тиенĕ эшелонсем туллиех пулнă.

Батайск хулине тытса илнĕ боецсем умĕнче пăрпа витĕннĕ Дон шывĕ выртнă. Тăшман пĕр чарăнмасăр персе тăнине тата бомбăсем пăрахнине пăхмасăрах, инженерла подразделенисем хамăр танксене кайма каҫăсем хатĕрлесе ҫитерсе пынă. Кăнтăрла Симĕс утравран хула патнелле пăр тăрăх танксем вăркăннă. Хăвăрт тата вирлĕн пырса ҫапни хăйĕн ĕҫне тунă. Тул ҫутăлнă тĕле совет боецĕсем хулан кăнтăр пайне, вокзала тата заводсен районне тытса илнĕ.

Ҫапăҫу хаярлансах пынă. Гитлерла генералсем, Ростова юлашки вăй пĕтиччен хӳтĕлеме хушакан хăйсен «фюрерĕн» приказне пурнăҫлас тесе, хаяррăн хирĕҫ тăрса ҫапăҫнă. Ҫĕнĕрен танковăй тата пехотнăй чаҫсене иле-иле пырса, противник темиҫе хутчен те контратакăсем тунă. Пурте вĕсем усăсăр пулнă. Ҫапăҫу хирĕнче тăшман виллисем тата ҫĕмĕрсе аркатнă техника питĕ нумай выртса юлнă.

Февралĕн 10-мĕшĕнче Н-ски соединени, нимĕҫсен оборонине сарлака фронтра татнă хыҫҫăн, Шахты тата Новочеркасск хулисене ҫурҫĕрпе кăнтăр енчен хупăрласа илсе, ҫав хуласем патнелле пынă. Часах вара нимĕҫсене Шахты тата Новочеркасск хулисенчен хĕссе кăларнă. Ҫакăн хыҫҫăн вара Ростовшăн пыракан ҫапăҫу татăклă тапхăра куҫнă. Новочеркасск хулине йышăнса илсен пирĕн чаҫсем Ростов ҫинелле татăклă наступлени пуҫласа янă. Нимĕҫсем вăйлăрах хирĕҫ тăма пуҫланă. Вĕсем килхушшисенчен, ҫуртсенчен, чердаксенчен пĕр чарăнмасăр пулеметсемпе автоматсенчен персе тăнă. Урамсенче час-часах штык вĕҫҫĕн хаяррăн ҫапăҫа-ҫапăҫа илнĕ. Кăнтăр енчен, хĕвеланăҫĕнчен тата хĕвелтухăҫĕнчен ушкăнпа вирлĕн пырса ҫапса, февралĕн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Дон ҫинчи Ростов хулине йышăнса илнĕ.

Ҫав штурмра генерал-лейтенант В. Ф. Герасименко юлташăн войскисем уйрăмах палăрнă. Хулана чи малтан подполковник Ковалев юлташăн, подполковник Сыванков юлташăн, полковник Дряхлов юлташăн тата майор Дубровин юлташăн чаҫĕсем вăркăнса кĕрсе кайнă. Хĕвеланăҫ енчен хупăрласа пынипе хулана йышăнса илме полковник Шапкин юлташăн тата майор Ходос юлташăн чаҫĕсем пулăшнă.

Ростовшăн пынă ҫапăҫу совет войскисем ҫав тери паллă ҫĕнтерӳ тунипе вĕҫленнĕ.

Н. МАРКОВСКИЙ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Арми генералне А. М. Василевские ҫар званийĕ—Совет Союз Маршалĕн званине парасси ҫинчен

Арми генералне Александр Михайлович Василевскине ҫар званийĕ—Совет Союз Маршалĕн званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 ҫулхи февралĕн 16-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. И. Киреев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ пулма уйăрса лартасси ҫинчен

Алексей Иванович Киреев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн ҫар ҫыннисен ҫемьисене государство енчен пулăшу парса тăрас тĕлĕшпе ĕҫлекен заместителĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн ĕҫĕсене туса тăраканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 ҫулхи февралĕн 16-мĕшĕ.

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем СЛАВЯНСК, РОВЕНЬКИ, СВЕРДЛОВСК, БОГОДУХОВ, ЗМИЕВ, ГРАЙВОРОН хулисене йышăнса илнĕ

1). Февралĕн 17-мĕшĕнче Украинăра пирĕн войскăсем вăйлăн ҫапăҫнă хыҫҫăн СЛАВЯНСК хулипе чугунҫул узелне, ҫавăн пекех тата РОВЕНЬКИ, СВЕРДЛОВСК, БОГОДУХОВ, ЗМИЕВ хулисене йышăнса илнĕ.

2). Курск облаҫĕнче пирĕн войскăсем, наступление аталантарса пырса, ГРАЙВОРОН хулине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

—○—

Районри парторганизацин иртнĕ тапхăрти ĕҫĕсем

ШАМАРША. Районри коммунистсен отчетпа суйлав пухăвĕнче ВКП(б) райкомĕ отчетлă тапхăрта тунă ĕҫсем ҫинчен унăн секретарĕ Вислобоков юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик парти организацийĕн вăрҫă вăхăтĕнчи ĕҫĕсем ҫинчен ытларах чарăнса тăчĕ.

Отчетлă тапхăрта районри чи пултаруллă, ĕҫре тĕрĕсленнĕ 131 ҫынна парти ретне илнĕ. Вĕсенчен парти членĕн кандидачĕсем — 71 ҫын. 1942 ҫулта кăна парти ретне 45 ҫынна илнĕ. Ҫĕнĕ коммунистсене нумайĕшне ертсе пырас ĕҫсене лартнă. Вĕсенчен, чылайĕшĕ—хĕрарăмсем.

Прение 38 ҫын тухса каларĕҫ. Вĕсем парти райкомĕн ĕҫне хытă критиклерĕҫ, унăн ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене палăртрĕҫ, вăл ҫитменлĕхсене пĕтермелли мерăсем ҫинчен чарăнса тăчĕҫ.

Парти райкоме пуҫламĕш организацисене ҫителĕксĕр пулăшса тăнă, вĕсен ĕҫне тăтăшах тĕрĕслемен. Ҫавна пула чылай организацисем сӳрĕккĕн ĕҫлеме тытăннă.

Парти райкомĕн кадрсен отделĕ колхозсенчи кадрсене тĕрĕс вырнаҫтарса тухассишĕн тивĕҫлипе тăрăшман. Ертсе пырас ĕҫсене лайăх тĕпчесе вĕренмен ҫынсене лартнисем пулнă. ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕҫлекен секретарĕ Платонов юлташ ҫамрăк кадрсене суйласа илес ыйту ҫине тимсĕррĕн пăхнă, ҫамрăк кадрсене ĕҫлеме пулăшман.

Шăмăршă райҫĕрĕҫ пайĕн виҫĕ уйăх хушши ĕнтĕ заведующи ҫук. Анчах парти райкомĕ райҫĕрĕҫ пайĕн аппаратне ҫирĕплетес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Вырăнти промышленноҫăн районри предприятийĕсем (райпромкомбинат, Чукалри вăрман промысла артелĕ) производство планĕсене тултармаҫҫĕ. Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ вырăнти промышленность предприятийĕсене йĕркеллĕ ĕҫлеттерессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеҫҫĕ.

Районри парторганизаци ĕҫ ҫыннисене ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăҫлама тивĕҫлипе мобилизацилемен-ха. Ҫуракине сӳрĕккĕн хатĕрленнĕ пирки, машинно-тракторнăй станци иртнĕ ҫул хăйĕн планне 54 процент ҫеҫ тултарнă. МТС коллективĕ пĕлтĕрхи йăнăшран кăсăл та тивĕҫлĕ вывод туман. Тракторсемпе ялхуҫалăх машинисене юсас ĕҫсем ытла та вăраххăн пулса пыраҫҫĕ. Район, пĕтĕмĕшпе илсен, ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕҫлет.

Пуху партин районри организацийĕн ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене пĕтермелли мерăсене палăртрĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа пуху ВКП(б) райкомĕн тата ревизи комиссин составĕсене суйларĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем пулма Вислобоков, Самсонов тата Григорьев юлташсене суйланă.

Н. ПАДИАРОВ.

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ фронтра

Эпир халь ҫеҫ хаяр ҫапăҫу хирĕнчен кăшт канма тухрăмăр. Пирĕн телее пула, кану вăхăтне савăнăҫлă ирттерме чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ килни кăмăла хытă хавхалантарчĕ.

Кăмăл тулли хаваслăхпа итлерĕмĕр чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн концертне. Чăвашла, тутарла, украинла, казахла юрласа панă юрăсенче кашни халăхăн телейлĕхĕ, илемлĕхĕ курăнса кайрĕ. Ҫав кĕвĕсем пире кашни халăхăн телейне хӳтĕлессишĕн татах та хытăрах ҫапăҫма хавхалантарчĕҫ. «Туй юрри», «Колхоз уй-хирĕ», «Кай, кай Ивана» юрăсем пирĕн пата, тупă сассипе бомбăсем тата минăсем ҫурăлнине илтме хăнăхнăскерсем патне, тăван ҫĕршывра чухне килленнĕ савăнăҫа тепĕр хут ҫавăрса килчĕҫ. Пуринчен ытла Жилочкинпа Ульянова юлташсен ташшисем кăмăла кайрĕҫ. Текстсене конферансье И. Шубин вырăсла куҫарса парсан, каҫса кайса култăмăр. Ҫакăн хыҫҫăн эпир тăван ҫĕршывшăн алăри пăшала татах та хытăрах тытса кĕрешме тупа тăватпăр, фашизма пĕтĕмпе ҫĕмĕрсе тăкиччен пĕтĕм вăйран ҫапăҫма сăмах паратпăр.

Д. Тимофеев.

Танксемпе самолетсем тума республикăра 63 миллион тенкĕ ытла пухăннă

Республикăри районсенче танксемпе самолетсем тума укҫа пухас ĕҫ халĕ те пысăк ҫĕкленӳпе пулса пырать. Февралĕн 16-мĕшĕ тĕлне республикăра танксемпе самолетсем тума пĕтĕмпе 63.079.000 тенкĕ укҫа пухăннă. Ку ĕҫре ҫак районсем малта пыраҫҫĕ: Улатăр районĕнче танксемпе самолетсем тума 4.198.000 тенкĕ, Пăрачкав районĕнче 3.704.000 тенкĕ, Чкаловски районра 3.383.000 тенкĕ тата Шупашкар районĕнче 2.977.000 тенкĕ пухăннă.

Кăҫалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа февралĕн 16-мĕшне ҫити вăхăтра танксемпе самолетсем тума республикăра 20 миллион тенке яхăн пухăннă.

Хĕрлĕ Ҫар 25 ҫул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кросс

Вунă километра 40 минутăра

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Ҫар 25 ҫул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроса районри ҫамрăксем, комсомолецсем тата профсоюз членĕсем активлăн хутшăнаҫҫĕ. Январĕн 14—15-мĕшĕсенче кросра пурĕ 931 ҫын пулчĕҫ, вĕсенчен ГТО значок нормине 397 ҫын, БГТО значок нормине 445 ҫын пачĕҫ.

Кросса уйрăмах Красноармейскинчи вăтам шкул лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Кросăн малтанхи кунĕнче стартра 203 вĕренекен пулчĕ. Комсомолецсем С. Зилотин, А. Софронов, К. Бобров юлташсем 10 километрлă дистанцине 40 минута хушшинче чупса тухрĕҫ.

Р. Васильева.

* * *

КӲСЛАВККА. (Телефонпа). Районĕпе йĕлтĕрҫĕсен кросне пурĕ 2000 ҫын ытла хутшăнмалла пулнă. Анчах, ВЛКСМ райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, 930 ҫын ҫеҫ хутшăннă. Вĕсем —комбинатри, Кӳславкка вăтам шкулĕнчи тата ФЗО шкулĕнчи вĕренекенсем. Ялсенче те Кĕнерти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем кăна хутшăннă. Елчĕкри, Тĕрлемесри, Карачри вăтам шкулсем вара тата ытти ялсенчи туллимар вăтам шкулсем ҫанталăк начар пулнă пирки кроса хутшăнмасăр юлнă.

ВЛКСМ райкомĕ кросра хăш организаци, хăш команда мала тухнине те пĕлмест-ха.

Эпир фронта мĕнле пулăшатпăр

Т. АХАЗОВ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчен радио пирĕн пата кашни кунах çĕнĕрен те çĕнĕ хыпарсем илсе килет. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕççен фашистла оккупанчĕсене çине-çинех пырса çапать, вĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет хулисемпе ялĕсене, совет çыннисене ирĕке кăларать.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Сталинград районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕç войскисене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкни çинчен тата Курск, Ростов, Ворошиловград, Харьков хулисене илни çинчен пĕлтернине питĕ пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Предприятисемпе учреждениссенче тата колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. Совет çĕршывĕн мухтавлă воинĕсен паттăрлăхĕпе тата хăюлăхĕпе пĕтĕм чĕререн савăнса, вĕсен çапăçури ăнăçăвĕсем çине ответлесе, тылри патриотсем фронта пулăшассине татах та ытларах вăйлатрĕç, социализмлă ăмăртăва татах та ытларах сарса ячĕç, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле производствăри çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулса хăйсем çине обязательствăсем илчĕç.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ наступленийĕ тылри ĕççыннисен пуçарулăхне вăйлатать. Совет çыннисем Хĕрлĕ Çарăн наступленири вăйне ӳстерме, нимĕççен фашистла ирсĕрĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшаççĕ.

Тамбов тата Саратов облаçĕсенчи колхозниксен патриотла пуçарăвĕ пирĕн çĕршыври пĕтĕм колхозлă хресченсене хускатса ячĕ. Çак паха юхăма пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем тата трактористсем хăвăрт хутшăнчĕç. Совет Союзĕнчи малта пыракан облаçсем хыççăн пирĕн республика та танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума 31.552.000 тенкĕ пухни çинчен 1942 çулти декабрь уйăхĕнче Сталин юлташа пĕлтерчĕ. Сталин юлташ ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ патне янă телеграммăра çапла ответлерĕ: **«Чăваш Автономлă Социализмлă Республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене тата трактористсене, танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума 31.552.000 тенкĕ пухнăскерсене, — манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвăр».**

Сталин юлташ ăшă сăмахсемпе саламланă тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунă хыççăн, укçа-тенкĕ хывасси çĕнĕрен вăйланса кайрĕ. Танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума укçа пухнипе пĕрлех, республикăри комсомолецсемпе çамрăксем боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕçе сарса ячĕç. Чăваш республикинчи колхозлă хресченсем хушшинче укçа пухни вĕсем Совет çĕршывне тата Сталин юлташа чĕререн парăнса тăнине, колхоз стройĕ çирĕп пулнине уççăн кăтартса пачĕ. Урăхла пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен хресченсем «историре чи малтанхи хут хăйсене ирĕклĕ, культурăллă, пуян пурнăç туса панă государствăна хӳтĕлеççĕ. Историре чи малтанхи хут хресченсем вăрçă вăрçассине хăйсен ĕçĕ тесе шутлаççĕ, çав вăрçă мĕнле вĕçленнинчен вĕсен малашнехи кунçулĕ килсе тăрать» (Щербаков).

Малта пыракан чылай колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем тăван Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнин лайăх примерĕсене кăтартса пачĕç, танксемпе самолетсем тума нумай укçа-тенкĕ хыврĕç.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоз танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 500.000 тенкĕ пачĕ, вăл колхозăн председателĕ Васянин юлташ хăй перекетлесе хăварнă укçаран 100.000 тенкĕ хыврĕ. Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Гаврилов юлташ) 500.000 тенкĕ хыврĕ. Ку колхозра пĕр пин тенкĕрен кая хывнă колхозник пĕрре те пулман.

Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз (председателĕ Яблонский юлташ) пĕр миллион тенкĕ хывнă. Чкаловски районри «Маяк», «РОКК», «Çăлтăр» колхозсем, Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхоз, Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз, Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз, Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз, Калинино районĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхоз тата ытти колхозсем те 300.000 тенкĕрен пуçласа 500.000 тенкĕ çити хыврĕç.

Танксемпе самолетсем тума укçа парса, колхозниксемпе колхозницăсем ылханлă тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас ĕç валли пурне те тума хатĕр тăнине кăтартса пачĕç. Çакна Вăрмар районĕнчи «Красные Шигали» колхозри 72 çулти колхозник В. И. Табаков юлташ уççăн каласа панă, вăл колхозниксен пухăвĕнче çапла каланă: «Пирĕн тăвансен—Тамбов облаçĕнчи колхозниксен чаплă пуçарăвне эпир хĕрӳллĕн саламлатпăр... Манăн тăвата ывăлпа хĕрĕм вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах фронтра алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва хӳтĕлеççĕ. Эпир, уйрăмах чăвашсем, ирĕклĕ, пуян тата культурăллă пурнăçăн савăнăçне Совет влаçĕ чухне кăна курса пĕлтĕмĕр. Акă мĕншĕн ĕнтĕ хамăрăн юратнă ывăлсене фронта янă чухне эпĕ çапла каларăм: хăюллăн çапăçăр, тăван совет çĕршывне хӳтĕлĕр, ăна юлашки юн тумламĕ юлмиччене хӳтĕлĕр, халăхăн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн хăвăрăн пурнăçа та шеллесе ан тăрăр, терĕм. Манăн ывăлсем хăйĕн ашшĕн приказне чыслăн пурнăçа кĕртессе эпĕ шансах тăратăп, эпĕ вĕсене хамăн перекетленĕ укçа-тенкĕпе пулăшатăп».

Хĕрлĕ Çарăн сывлăшри вăйĕсем валли самолет илме чи малтан 100.000 тенкĕ хывнă Ферапонт Головатыйăн патриотла ырă пуçарăвĕ пирĕн республикăри колхозниксем хушшинче анлăн сарăлчĕ. Пуян пурăнакан колхозниксем хăйсен перекетленĕ укçа-тенкисене Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тунă çĕре пама пуçларĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Васянин, «Красный пахарь» колхоз председателĕ Н. С. Дубровин, Пăрачкав районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕ А. Ф. Пугачев, Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз колхозникĕ А. М. Сарсков, Чкаловски районри «Маяк» колхоз председателĕ Минаев, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ВКП(б) ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ф. И. Гурьянов, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Мотор» колхозри ферма заведующийĕ А. К. Тверсков юлташсем танксемпе самолетсем тума 100 пин тенкĕрен пуçласа 110 пин тенкĕ таран хыврĕç. Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз колхозници М. Ф. Ширмакова, Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозри хурт-хăмăр ăстаçи Д. И. Беляев, Пăрачкав районĕнчи «Трактор» колхоз председателĕ Н. С. Кашечкин, Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов, Ишлей районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. П. Гуськов, Чкаловски районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Кузнецов, Чкаловски районри Г. Л. Лотфуллин тата Н. Е. Тенюков колхозниксем 50-шар пин тенкĕ хыврĕç. Шăмăршă МТС трактористчĕ Н. В. Камкин юлташ 30.000 тенкĕ хыврĕ. Нумай колхозниксемпе трактористсем 15 пин тенкĕрен пуçласа 30 пин тенкĕ çити хыврĕç.

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз пуçарнипе Хĕрлĕ Çар фондне колхозниксен личнăй запасĕнчен ялхуçалăх продукчĕсем парасси анлăн сарăлса кайрĕ. Юлашки вăхăт тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне 120 пин пăт ытла тырă панă.

Танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе республикăри комсомолецсемпе çамрăксем те активлăн хутшăнчĕç. Чкаловски районри «РОКК» колхозри комсомолецсем пуçарнипе, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç ăнăçлăн пулса иртрĕ. Çав колхозăн председателĕ Каргин тата комсомол организацин секретарĕ Еливанов юлташсем чи малтан 25-шер пин тенкĕ хыврĕç.

Кĕске вăхăт хушшинчех самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 6 миллион тенкĕ пухăнчĕ, республикăри комсомолецсемпе çамрăксем пысăк тава тивĕçлĕ пулчĕç, вĕсем Сталин юлташран салам тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунине илчĕç.

Самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕçе пуçаракансене ответлесе, колхозниксен пухăвĕнче Кавалри комсомол организацин секретарĕ Тамара Табакова çапла каланă: «Вăтă ăруран тухнă мухтавлă геройсемпе пĕр ретре комсомолăн, совет çамрăкĕсен представителĕсем—Зоя Космодемьянская, Лиза Чайкина, Молодчий тата ыттисем те тăраççĕ. Малта пыракансен примерне йышăнса, пирĕн фронта пулăшас ĕçе хутшăнмалла, çавăнпа та эпĕ самолетсен эскадрильине тума 10.000 тенкĕ паратăп».

Табакова примерĕпе çавăнтах ыттисем те укçа пама тытăннă. Мария Трофимова комсомолка, отечественнăй в[illegible]ăра аманнăскер, 5.000 тенкĕ панă.

Сталин юлташ саламлани тата вăл Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав туни республикăри ĕççыннисене пурне те савăнтарчĕ. Танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе предприятисенчи, артельсенчи, чугунçул çинчи рабочисемпе служащисем, медицина работникĕсем тата ытти те хутшăнчĕç. Февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне танксемпе самолетсем тума республикăри ĕççыннисем 62.327.000 тенкĕ, вăл шутран танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 45.000.000 тенкĕ, «Тракторист Чувашии» колоннине ума 2.220.000 тенкĕ, «Медработник Чувашии» колоннине тума 262.000 тенкĕ, «Лесоруб Чувашии» колоннине тума 440.000 тенкĕ, самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 11.011.000 тенкĕ, уйрăм çынсем ыйтнă тăрăх танксемпе самолетсем тума 550.000 тенкĕ тата бронепоезд тума 600.000 тенкĕ пачĕç.

Танксен колоннисене, уйрăмах самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума фабрикăсемпе заводсенчи тата учреждениссенчи çамрăксемпе ытти рабочисем нумай укçа-тенкĕ пачĕç. Çак тĕлĕшпе нумай предприятисенче воскресниксем туса иртернĕ.

Ăшă тумтирсем пухса пани те юратнă Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнине кăтартса парать. 1942—43-мĕш çулсенчи хĕл вăхăтĕнче республикăри ĕççыннисем 2.430 кĕрĕк пиншак, 4.500 мăшăр çăматă, 4.480 мулаххай, 1.900 мăшăр тир алса, 4.230 мăшăр çăм алшишсем, 2.000 мăшăр ытла çăм тăласем тата ытти те — пĕтĕмпе 35.000 япала панă.

Анчах çакна та палăртас пулать: хăшпĕр районсенчи руководительсем çак ĕçе тивĕçлипе хаклăнă пулсан, эпир Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем чылай нумайрах пухса пама пултарнă.

Республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара юратни тата фронтпа пĕрмаях çыхăнса тăни фронта тăтăшах парнесем ярса тăнинчен те курăнать. Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă тĕле хамăр шефа илнĕ Ерохин юлташ ертсе пыракан дивизие парнесем тиесе 17 вагон янă.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни çывхарса килнĕ май парнесем пухас ĕç те ăнăçлăн пулса иртрĕ. Фронта, пахча-çимĕçсемсĕр пуçне, аш-какай, колбаса, çу, канфеткăсем, табак, эрех, пыл, лайăх сортлă çăнăх тата ытти те тиесе 10 вагон парне янă.

Совет Союзĕнчи халăхсен интернационаллă туслăхне палăртакан тĕслĕхе — фронтра çапăçакан пĕр дивизи валли икĕ вагон парне пухса хатĕрленине — уйрăмăнах палăртса хăвармалла.

Танксемпе самолетсем тума 62 миллион тенкĕ укçа пухни, Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласемпе тĕрлĕрен парнесем хатĕрлени, 1942 çулта акăнакан çĕр лаптăкне ӳстерни, общественлă вырăхсен хисепĕ хутшăнни, республика тырă парас плана вăхăтра пурнăçлани тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă пани, фронта валли ĕçлекен производство плана ытлашшипех тултарни,—çакăн пек ответлетпĕр эпир ăнăçлăн наступлени туса пыракан паттăр Хĕрлĕ Çара. Асăннă ĕçсем вĕсем эпир фронта пулăшнин пĕр пайĕ çеç-ха.

Анчах та тăшмана тĕппипех аркатса тăкма пулăшас енĕпе пирĕн тата нумайрах ĕçлемелле. Кĕçех Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнин юбилейĕ килсе çитет. Хăй 25 çул тултарнă юбилей тĕлне Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре калама çук паллă çитĕнӳсемпе пырать. Урса кайнă тăшманпа 20 уйăх хушши кĕрешнĕ вăхăтра совет халăхĕ пулас çĕнтерӳĕн çирĕп никĕсне хыврĕ. Тăшмана тĕпренех çапса аркатасси халĕ ĕнтĕ хамăрăн пĕтĕм вăя тата ытларах пĕтĕçтернинчен, хамăрăн тыла тата вăйлăнрах çирĕплетнинчен, дисциплинăпа йĕркелĕхе ӳстернинчен, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пĕтĕмпех çителĕклĕ таран парса тăма тăрăшнинчен килет. Пирĕн пĕтĕм ĕç çак задачăна пăхăнса тăмалла та ĕнтĕ.

Парти организацийĕсен, кунсăр пуçне, Осоавиахим, РОКК организацийĕсен, физкультура обществисен ĕçĕсене ертсе пырасси çине уйрăмах çавăрăнса пăхмалла, Хĕрлĕ Çар валли тивĕçлĕ резервсем хатĕрлемелле, всевобуч подразделенийĕсен ĕçне тивĕçлипе организацилемелле, сывлăшран килсе тапăнассинчен тата химилле тапăнуран сыхланас тĕлĕшпе СССР Верховный Совечĕ кăларнă Указа пурнăçласа пымалла.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна пирĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сарса пынипе, пур предприятисенче те производствăллă заданисене пурнăçланипе, çуракине тивĕçлĕн хатĕрленнипе, фронта пулăшассине пур енчен те вăйлатнипе кĕтсе илмелле.

Фронтри боецсен паттăр кĕрешĕвне тивĕçлĕ ĕçлер

Пирĕн «Сура» колхозăн фермисенче çамрăк хĕрачасем-комсомолкăсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен пĕтĕм пĕлĕвĕпе пултарулăхне ĕçе хурса, фронтри боецсене пысăк пулăшу пама тăрăшаççĕ. Паттăррăн ĕçленипе ĕнтĕ пирĕн колхоз пур йышши выльăхсем енĕпе те государство планне çулран çул ирттерсе пурнăçласа пырать. Кăçал та эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ирттерсе тултартăмăр, выльăхсен тухăçлăхне ӳстертĕмĕр. Пирĕн фермăсенче халĕ майракаллă шултăра выльăх 124 пуç, сурăхсем 150 пуç, сыснасем 63 пуç. Чăхчĕппе хур-кăвакал ферминче пурĕ 264 чăх тата 31 хур. Кунсăр пуçне тата пĕлтĕр колхоз кроликсен фермине организацилерĕ. Ĕнесĕр колхозниксене 16 пăру пачĕ.

Пирĕн колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесе памалли 1942 çулхи плана пĕтĕмĕшпех тата срокчен тултарчĕ. 1943 çулшăн халĕ эпир государствăна 165 пăт аш-какай, 70 килограмм çăм, 4.000 литр сĕт патăмăр. Государствăна памалли выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене кăçал эпир июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех парса тататпăр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитĕнӳсене эпир выльăхсене юратса пăхнипе туса пыратпăр. Пирĕн дояркăсем, свинаркăсем, телятницăсем тата ыттисем те çулталăкри производство планĕпе тĕплĕн паллашнă, ăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта эпир планпа пăхнинчен 2.100 литр сĕт ытларах суса илтĕмĕр, çапла вăл кашни фуражлă ĕнерен çулталăк хушшинче сĕт 1.372 литр суса илни пулать.

Кăçал эпир, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кашни фуражлă ĕнерен 1.400 литр сĕт суса илессишĕн, çамрăк пăрусене пурне те лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн, вăтам шутпа кашни сурăхран 4 килограмм çăм касса илессишĕн, кашни 100 сурăхран 120 путек илессишĕн кĕрешетпĕр.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пыма тытăнтăмăр. Кăçал выльăх апатĕнче концентратсем иртнĕ çулхинчен сахалрах. Çакна шута илсе, эпир ĕнесене ытларах пăтратни туса çитеретпĕр, пăрусене утă вĕретсе тунă шыв тата минераллă подкормка паратпăр. Выльăхсене силос пама пуçларăмăр. Фермăсенче ĕçлекенсен вăйĕпе иртнĕ çул эпир силос нумай хатĕрлерĕмĕр. Выльăхсене юратса тимлĕн пăхнипе, фермăсенче тасалăхпа йĕркелĕх тунипе эпир хамăр çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлăпăр.

Е. Кузьмина,

Етĕрне районĕнчи «Сура» колхоз фермисен заведующийĕ.

Икĕ колхозăн ăмăрту итогĕсем

Сталин юлташ фронтпа çĕршыва куллен пысăк пулăшу парса тăма чĕнни çине ответлесе, иртнĕ çул Элĕк районĕнчи Жданов ячĕпе тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç. Ăмăрту пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе тухăçлăхне ӳстерессишĕн пычĕ.

Çак кунсенче колхозсем ăмăрту договорне епле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслӳ результачĕсем икĕ колхозĕ те 1942 çулта вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ ĕçленине кăтартса пачĕç.

Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз çуракине договорта кăтартнă 10 кун вырăнне 7 кун хушшинче туса пĕтернĕ. Колхоз çуркуннехи агротехникăллă мероприятисене пĕтĕмĕшпех пурнăçланă, уя 2.240 лав вырăнне 3.520 лав тислĕк кăларнă.

Азаматри Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине 6 кун хушшинче туса иртернĕ, планран ирттерсе 5 гектар çине пăри акса хăварнă.

Ăмăрту договорĕ тăрăх тырăсене уйран 15 талăк хушшинче пухса кĕртме йышăннă. Ку обязательствăна та колхозниксем чыслăн пурнăçланă: кĕрхи тырăсене Жданов ячĕпе тăракан колхоз 8 ĕç кунĕнче, Киров ячĕпе тăракан колхоз 8,5 ĕç кунĕнче вырса пухнă, çурхи тырăсене те 6—7 ĕç кунĕнче пĕтĕмĕшпех вырса пуçтарнă. Авăн çапас ĕçе Киров ячĕпе тăракан колхоз МТС пулăшнипе август уйăхĕнче, Жданов ячĕпе тăракан колхоз хăйĕн вăйĕпех ноябрĕн 18-мĕшĕнче вĕçленĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă сентябрь уйăхĕнче, Киров ячĕпе тăракан колхоз — октябрь уйăхĕнче парса татнă.

Çуркуннехи агротехникăллă мероприятисене тĕплĕн пурнăçланипе Жданов ячĕпе тăракан колхоз 1942 çулта гектартан вăтам шутпа 14-шер центнер, Киров ячĕпе тăракан колхоз 10,3-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 3,4 килограмм тĕштырă, 2-шер килограмм çĕрулми, 33-шер грамм пыл тата укçăн 2 тенкĕ те 80-шер пус валеçсе панă. Кашни ĕçкунĕ пуçне Киров ячĕпе тăракан колхоз колхозниксене тĕштырă 2,33 килограмм, çĕрулми — 400 грамм та та 85-шер пус укçан валеçнĕ.

Выльăх-чĕрлĕхĕн йышне тата тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те çав колхозсем аван ĕçленĕ. Пур выльăхсем енĕпе те государство панă плана тултарнă. Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз государствăна аш-какай памалли плана иртнĕ çулшăн та, кăçалхи çулшăн та тахçанах тултарнă, 1944 çулхи обязательство шучĕпе те государствăна 55 килограмм аш-какай панă. План тăрăх кашни ĕнерен иртнĕ çул 1.200 литр сĕт суса илмелле пулнă, ферма работникĕсем хастарлă ĕçленипе кашни ĕнерен 1.267 литр сĕт суса илнĕ. Колхоз кашни ама сыснаран 14,5-шер сысна çури илсе ӳстернĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз та сĕт суса илес плана ирттерсе тултарнă, анчах Жданов ячĕпе тăракан колхозри кашни ĕне çулталăк хушшинче вĕсен ĕнисенчен 353,5 литр сĕт ытларах панă.

Çапла, 1942 çулхи социализмлă ăмăртура Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз лайăхрах результатсем кăтартнă. Ăмăрту итогĕсем колхозниксене ялхуçалăхĕнче тата пысăкрах ӳсĕмсем тума хавхалантараççĕ. 1943 çулта татах та вăйлăрах тырпул туса илессишĕн тăрăшса, Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз кĕркунне çĕртме сухине 59 гектар çинче туса хăварчĕ, кĕрхи тырăсем акнă вырăна 210 лав ытла фекали тата тислĕк нумай кăларчĕ. Хальхи вăхăтра çав ăмăртакан колхозсем çуракине хатĕрленеççĕ. Ку тĕлĕшпе халь чылаях пысăк ĕçсем тунă. Жданов ячĕпе тăракан колхоз кăçал та колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче малти ретре пулассишĕн кĕрешет. Синер колхоз членĕсем Азамат колхозĕн членĕсене хăйсемпе ăмăртса ĕçлеме чĕнеççĕ.

А. Черенков.

Хурт-хăмăр ĕрчетекенсен курсĕ

КАНАШ. Çак иртнĕ кунсенче хурт-хăмăр ĕрчетес енĕпе ĕçлекен республикăри контора районри Коминтерн ячĕпе тăракан колхозра пыл хурчĕ мастерĕсем хатĕрлекен курсран вĕрентсе кăларчĕ. Курсра Канаш районĕпе кӳршĕллĕ районсенчи пыл хурчĕ ĕрчетес енĕпе ĕçлекен колхозниксем те пулчĕç.

Ĕç планне уйăхран уйăха ирттерсе пурнăçлаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Районри апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннăранпа хăй çине илнĕ обязательствăсене тивĕçлипе пурнăçласа пырать. Декабрь уйăхĕнчи плана комбинат 109 процент, январь уйăхĕнчи плана 113 процент тултарчĕ.

Коллектив февраль уйăхĕнче та та тухăçлăрах ĕçлени палăрать. Февраль уйăхĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинче комбинат производство заданине ирттерсе тултарчĕ.

Х. Лисин.

ПАРĂМСЕНЕ СРОКЧЕН ТӲЛЕÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Досаево ялсоветне (председателĕ Н. Лоськова юлташ) кĕрекен ялсенчи колхозниксемпе колхозницăсем 1943 çулхи парăмсене срокчен тӳлеççĕ. Нумай колхозниксем çак кунсенче военнăй налога, самообложени укçине парса татрĕç.

«Шимар» колхоз бригадирĕ С. Ильин юлташ хăйĕн çемьинчи 4 çыншăн военнăй налог укçине пурринчен малтан тӳлесе, лайăх пример кăтартрĕ. Паянхи кун тĕлне ялсовечĕпе военнăй налогшăн 6.439 тенкĕ укçа тӳленĕ. Вăл плана 60 процент ытла тултарни пулать.

Ялсовечĕ самообложени пухас плана та 50 процент ытла пурнăçланă. Е. Кузьмин, О. Павлова, М. Андреева, Е. Крылов хăйсен парăмĕсене 100 процентчĕпех тӳлесе татнă.

Ют çĕршывсенче

Ростова тата Ворошиловграда илни Хĕрлĕ Çарăн тепĕр питех те чаплă ĕçĕ пулса тăчĕ

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ СОВЕТ ВОЙСКИСЕМ РОСТОВПА ВОРОШИЛОВГРАДА ИРĔКЕ КĂЛАРНИ ÇИНЧЕН ÇЫРНИ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Дон çинчи Ростова тата Ворошиловграда илни çинчен калакан хыпар Англире хытă савăнтарнă. Ирхине тухакан хаçатсем çав пĕлтерĕве пĕрремĕш страницăра питĕ пысăк саспаллисемпе пĕтĕм страницăн сарлакăшпех пичетленĕ. Британин радио саракан компанийĕ Ростовпа Ворошиловграда илни çинчен февралĕн 14-мĕшĕнче каçхине пĕлтернĕ. Юлашки хыпарсене пĕлтернĕ чухне темиçе хутчен „Ростова илнĕ! Ростов — вырăссен аллинче!“ тесе хушса хунă.

Рейтер агентстви хăйĕн ятарласа пичетленĕ пĕлтерĕвĕнче çапла калать: Ростовпа Ворошиловграда илни Хĕрлĕ Çарăн тепĕр питех те чаплă ĕçĕ пулса тăрать, тет. Англи информаци министерстви те çавнах палăртать: Ростова илни Хĕрлĕ Çарăн наступленине çĕнĕ пысăк ĕçпе чапа кăларать, тет вăл.

Рейтер агентствин вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла калать: Хĕрлĕ Çар Германи çарне тепĕр хут çĕнтерчĕ, вăл тактика енчен унтан малта тăнине кăтартрĕ. Германин Донец тăрăх пыракан фронт линийĕ Хĕрлĕ Çарăн боевой хăватне хирĕç чăтса тăраймарĕ. Вырăссем тĕлĕнмелле хăвăрт малалла тапăнса пыраççĕ. Нимĕç салтакĕсен хастарлăхĕ чакнă, тет вăл.

„Дейли экспресс“ хаçат Ростова илнине вăл совет войскисене тата пысăкрах çитĕнӳсем тума пулăшакан услови пулса тăрать тесе хаклать. „Таймс“ хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ те çавнах кăтартса парать: Ростова илни Хĕрлĕ Çара малалла тата хытăрах тапăнса пыма май парать, тет вăл.

„Рейнольдс ньюс“ хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ Вернер çапла калать: Англипе Америкăн наступленине мĕн май килнĕ таран хăвăртрах пуçласа ямалла. Гитлер пĕр минута та кунта тăма ан пултартăр, фашистла тискер кайăка ăна вĕлеричченех хăваласа пымалла. Хĕрлĕ Çар анлăн наступлени туса пынине пула Англипе Америка вăйĕсем халь ĕлĕкрех шутлама пултарнинчен ытларах майсем тупрĕç. Наступление Англипе Америкăн тĕп вăйĕсем Британи утравĕсенчен кĕске çулпа пырса пуçламалла, Германин стратеги тĕлĕшĕнчен питĕ паха центрĕсене хирĕç наступлени тумалла. Наступленин тепĕр тапхăрĕнче Германи армийĕсене Кăнтăр енчен — Çурçĕр Африкăпа Вăтаçĕр тинĕс енчен пырса флангран çавăрса илмелле. Çавăнпа пĕр вăхăтрах Çурçĕр-Хĕвеланăçĕнче тата Кăнтăрта нумай еннелле стратегиллĕ диверсисем тумалла, вĕсене хăш енчен пырса чи вăйлăн çапассине пытарас шутпа тумалла. Европа çыранĕсенчи пĕр сектор та Гитлершăн хăрушă мар сектор пулса юлмалла мар.

ФРАНЦИ КАРАПĔСЕМ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЕ ПЫРСА ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Французсен тинĕс-çар миссийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Нью-Йорка французсен «Ришелье» ятлă линкорĕ тата союзниксен флючĕпе пĕрлешнĕ ытти çар карапĕсем те пырса çитнĕ.

«Ришелье» линкор Дакартан пынă. Ăна юсамалла пулать. Французсен çарпа тинĕс миссийĕн членĕсем каланă тăрăх, линкорпа пĕрле «Террибль», «Фантаск» ятлă эсминецсем тата «Монткальм» крейсер пынă. Линкора Нью-Йорка Жиро приказĕ тăрăх янă. Французсен тинĕс-çар миссийĕн пуçлăхĕ адмирал Фенар çапла каланă: французсен çар флючĕн хăшпĕр ытти карапĕсем союзниксен çар карапĕсемпе пĕрле операцисене хутшăннă та ĕнтĕ, тенĕ.

ИРАН ПРАВИТЕЛЬСТВИ УЛШĂННИ

ТЕГЕРАН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Иранри министрсен совечĕн председателĕ Ахмед Гавам отставкăна тухнă. Çĕнĕ кабинет туса хума шах Сохейлине хушнă. Сохейли кандидатуришĕн Меджлисăн пысăк пайĕ сасăланă пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

1943-мĕш çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарта лаша çухалнă. Лаша çӳрен, 8 çулта, çӳллĕшĕ 134 см. Çав лаша ӳçтине пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатăр: Шапкино ялĕ, Мартынкасси ялсовечĕ, колхоз „Чăваш Коммуни“.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 950 Типография № 1, Управлени полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58.84 п.